Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2013 · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2012 · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2011 · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMIX · ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII

80 (8146) № ✻ Шăмат кун, 2013 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 26-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Автомобиль транспорчĕн ĕçченĕсен кунĕ

## Вăл яланах рейсра

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан водитель – «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă обществин экономикине тивĕçлĕ тӳпе хывакансенчен пĕри. Пĕрремĕш класлă водитель Владимир Жигалев асăннă коллективра 20 çул ытла вăй хурать. «Техника ĕмĕрĕнче пурăнатпăр та автомашина пулăшăвĕпе те нумай ĕçсене хăвăртрах пурнăçлама пулать. Ку вара ыранхи ăнăçусен никĕсĕ. Çакна ăнланса хама шанса панă автомашинăна яланах юсавлă тытма тăрăшатăп», – терĕ Владимир Владимирович эпĕ хăйне водительсен професси уявĕпе саламланă хыççăн.***



**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

### АВТОМОБИЛЬ ТАТА ХУЛАРИ ПАССАЖИР ТРАНСПОРЧĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Йышлă çулсемлĕ пирĕн республикăшăн автомобиль транспорчĕ тухăçлă та кăлтăксăр ĕçлени уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Шăпах эсир, çăмăлах мар, хастар тата социаллă пĕлтерĕшлĕ çак професси çыннисем, республикăра пурăнакансене Чăваш Енĕн кирек хăш кĕтесне те çитме май туса паратăр. Сирĕн лайăх ĕçĕре пула предприятисемпе организацисем тата çынсем кирлĕ таварсене вăхăтра илсе тăраççĕ.

Эсир пурнăçлакан ĕçре йывăрлăхсемсĕр мар. Вĕсен шутĕнче автомобиль паркне çĕнетес ыйтусем те, чылай хуçалăхри пурлăхпа çыхăннă ларутăру та. Çапах та çакна пăхмасăр, эсир пысăк технологисене ăнăçлăн ĕçе кĕртетĕр. Спутник навигацийĕн ГЛОНАСС тытăмĕпе усă курни автомобиль тата хулари пассажир транспорчĕн ĕçне чăн вăхăт йĕркипе асăрхаса тăма май парать.

Малашлăхри тĕллев – пассажирсем турттарас ĕçе, шкул автобусĕсене, васкавлă медицина пулăшăвĕн, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх машинисене, пысăк калăпăшлă та хăрушă тата йывăр грузсем турттаракан транспорт хатĕрĕсене асăрхаса тăрассине тивĕçтерме Чăваш Республикин регионти информаципе навигаци тытăмне йĕркелесси. Çакăн валли 2013 – 2014 çулсенче федераци тата республика бюджечĕсенчен, бюджет тулашĕнчи çăл куçсенчен 115 миллиона яхăн укçа-тенкĕ уйăрма палăртнă.

Пассажир транспорчĕпе çӳренĕшĕн электронлă енчĕкпе е çул çӳремелли билетпа укçасăр татăлма май пулни çул çӳреве хăтлăрах тума пулăшрĕ. Паян Шупашкарта электронлă транспорт карттисене сутакан тата вĕсене тултарса паракан 47 пункт ĕçлет, вĕсен шучĕ малашне тата ӳсмелле.

Автотранспорт предприятийĕсен хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем, сире çак уяв кунĕнче чунтан çирĕп сывлăх, мĕн пур ырă пуçарура ăнăçу, телей тата ырлăх сунатăп!

**М. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

### АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире хăвăрăн професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Предприятисемпе организацисен ĕçĕ-хĕлĕ сирĕн кулленхи тăрăшуллă ĕçĕрпе тачă çыхăннă. Кирек хăш отрасльте ĕçлесен те, хăвăрăн тивĕçĕре чунчĕре хушнă пек пурнăçлатăр. Чылай чухне çăмăл мар условисенче вăй хуратăр. Районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕшĕн ырмиканми тăрăшатăр. Тавах сире çăмăл мар пархатарлă ĕçĕршĕн.

Эсир малашне те хăвăрăн тивĕçĕре тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласса, çул çинче тимлĕх пирки пĕр самантлăха та манмасса шанас килет. Хăвăрăн йăнăшма юраманнине, ĕçĕр вуншар, çĕршер çын пурнăçĕпе çыхăннине пĕр самантлăха та ан манăр.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳ сунатăп. Çулăр сирĕн яланах уçă та тикĕс, кунçулăр вăрăм та телейлĕ пултăр. Инкек сирĕн çывăхăра та ан пытăр. Килĕрте яланах сире çывăх çыннăрсем кĕтсе тăччăр, яланах кĕтсе илччĕр.

**Р. ТИМОФЕЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

## Республика кунĕ – Комсомольскинче

Указ

Октябрĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «2014 çулта Республика кунне ирттересси çинчен» Указа алă пуснă. Çапла вара çитес çул пысăк уявпа çыхăннă тĕп мероприятисем Шупашкар хулинче тата Комсомольски районĕнче иртĕç. Шăпах Комсомольски районне Чăваш Республикин муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен Республика кунĕн уяв мероприятийĕсене хăйсен территорийĕнче ирттермелли ирĕке çĕнсе илмелли конкурсăн çĕнтерӳçи тесе йышăннă.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне 2014 çулта Республика кунне хатĕрленсе ирттермелли мероприятисен планне хатĕрлесе çирĕплетме, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн грантне Комсомольски районне халăх пурăнакан вырăнсен общество инфратытăмне аталантармашкăн пама хушнă.

Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене 2014 çулта йăлана кĕнĕ Акатуй уявĕсене, Республика кунне халалласа культурăпа массăллă тата спорт мероприятийĕсене йĕркелеме сĕннĕ.

Прием граждан

**31 октября 2013 г. с 10.00 до 12.00 час. приём граждан по личным вопросам проводит Николаев Николай Станиславович – руководитель Региональной общественной приёмной Председателя Партии Д.А. Медведева в Чувашской Республике, депутат Государственного Совета Чувашской Республики, главный врач ФГБУ «Федеральный центр травматологии, ортопедии и эндопротезирования» Министерства здравоохранения Российской Федерации (г. Чебоксары) по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, д. 9 (офис Партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ»).**

**Запись на приём по тел.: 62-1-80.**

Çырăнтару – 2014

## Çырăнмасăр ан юлăр!

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2014 çулхи январьтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.**

**Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулар!**

Кĕскен

## «Муркаш калаçать...»

Унччен район хыпарĕсен передачи ирхи 8 сехет те 30 минутра эфира тухатчĕ. Чылайăшĕ ăна итлеме, район пурнăçĕпе паллашма кăмăллать. Анчах та передача вăхăчĕ ял çыннишĕн меллех марччĕ темелле. Ялта пурăнакан çак вăхăта ирхи ĕçсене туллин кӳлĕнме ĕлкĕрет ĕнтĕ. Пур чухне передачăна итлеме май килмест те. Çавна май радио итлекенсем ыйтнине тивĕçтерсе малашне район передачине кашни юн кун ирхи 6 сехет те 30 минутра эфира кăларма тытăнма йышăннă. Апла пулсан радио итлекенсене кашни юн кунах ирхи 6 сехет çурăра радиоприемниксем умне йыхравлатпăр.

Районта: ĕнер, паян, ыран

## Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă

Хальхи вăхăтра район администрацийĕн пуçлăхĕн куллен вуншар ыйту татса пама тивет. Ростислав Тимофеев октябрĕн 24-мĕшĕнче республика Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă. Тĕл пулу вăхăтĕнче районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн ыйтăвĕсем пирки сăмах пынă, районти промышленноç, ял хуçалăх аталанăвĕн, пурăнмалли çурт-йĕр строительствин, çĕр хутшăнăвĕсене йĕркелесе çитерессин ыйтăвĕсем çинче чарăннă.

## Канашлу – вырăна тухса

Муркашра лицей пулнă çуртран ача сачĕ тăвас ĕçсем малалла пыраççĕ, анчах та «Мера» чикĕллĕ яваплăхлă общество пурнăçлакан реконструкци ĕçĕсем вăраха тăсăлаççĕ. Ĕç графикпа палăртниннчен кая юлса пырать. Паянхи куна кунта çурт тулашĕнчи ĕçсем вĕçленнĕ, тепĕр подрядчик çурт таврашĕнче тирпей-илем кĕртессипе тимлет.

Лару-тăрупа тĕплĕнрех паллашас тĕллевпе иртнĕ юн кун Муркашра ЧР вĕренӳпе çамрăксен политикин министрĕн çумĕ Н. Димитриева пулнă. Вырăна тухса ирттернĕ канашлăва район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, район администрацийĕн управленипе пай ертӳçисем В. Никитинпа З. Дипломатова хутшăннă. Реконструкципе «Мера» е урăх общество ĕçлесси çивĕч калаçу çуратнă.

## Хăрушсăрлăх пĕлтерĕшлĕ

Çак эрнере районта çул-йĕр хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерессипе ĕçлекен комиссин черетлĕ анлă ларăвĕ иртнĕ. Районти ертӳçĕсене, шкул директорĕсемпе ача сачĕсен ертӳçисене, муниципалитет заказĕпе пассажирсем турттаракан предприяти ертӳçисене явăçтарнă ларăва Чăваш Республикин ГИБДД управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ О. Федоров та хутшăннă. Ларура çул-йĕр хăрушсăрлăхне асăрхаттарассишĕн яваплă пулса тăракан тĕрлĕ субъектсен ĕçне тишкернĕ.

Республикăн тĕллевлĕ программине улшăнусем кĕртнине пула ГИБДД управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ О. Федоров районăн «2013–2020 çулсенче Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнче çул-йĕр хăрушсăрлăхне ӳстересси» муниципалитетăн тĕллевлĕ программине тепĕр хут пăхса тухма кирлине пĕлтернĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев асăннă программа мĕнле пурнăçланнине уйăх вĕçлениччен тишкерме тата çитменлĕхсене пĕтерме ыйтнă.

## Аса илӳ каçĕнче

Ермак ялĕнче çуралса ӳснĕ Георгий Мешаков композитор 60 çул тултарнине халалласа Ярапайкасси ял тăрăхĕнче аса илӳ каçĕ иртнĕ. Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ В. Романов композиторăн ĕçĕ-хĕлĕпе пурнăçне халалласа кĕнеке кăларнă. Уяв каçĕнче çак кĕнекен презентацийĕ те пулнă.

Уява ял-йышпа пĕрле районти, республикăри паллă композиторсем чылайăн хутшăннă. Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Павлов уява йĕркелекенсене тата ял-йыша тав туса кун пек мероприятисем халăха кирлине тата пĕлтерĕшлине палăртнă.

## Пĕрисен – кĕпер, теприсен – хапха

Оринин ял тăрăхĕнчи Мулкачкасси ялĕн тĕп урамне Екремеккипе çыхăнтаракан тахçанах япăхма пуçланă кĕпере юсама халăх йышлăн тухнă. Кĕпере юсассинче ял старости В. Калинин пуçаруллă пулнă. Ĕç документĕсене хатĕрлесе, ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе А. Волковпа пĕр чĕлхе тупса лава вырăнтан тапратнă. Ял тăрăхĕн администрацийĕ çак ĕçе пурнăçлама 25 пин тенкĕ уйăрма пултарнă. Мулкачкассисем халĕ çĕнĕ кĕперпе мухтанма та пултараççĕ.

Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Кĕртекассисем вара ял хапхи çĕрĕшнĕрен ăна юсаса çĕнетес ыйтупа ял тăрăхĕн администрацине тухнă. Администраци кирлĕ хатĕрсем туянса панă, ĕçе пурнăçлакана та тупнă. П. Константинов çĕнĕ хапхана часах туса пĕтернĕ, сăрласа хăт кĕртнĕ.

## Ачасен сывлăхĕ – тĕп вырăнта

Районти тĕп больницăра вăй хуракан сывлăх хуралçисен канашлăвĕ иртнĕ. Унта участок терапевчĕсем, пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕсен врачĕсем, уйрăм специалистсем, фельдшерпа акушер пункчĕсен фельдшерĕсем, медицинăн вăтам персоналĕ хутшăннă. Сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕсем канашлура пăхса тухнă тĕп ыйтусенчен пĕри – кăкăр ачисем тата пĕчĕк ачасем вилессине чакарасси. Кун пек кашни тĕслĕх тĕлĕшпе анлă тишкерӳ ирттернĕ. Кунпа пĕрлех диспансеризаци ирттерессин ыйтăвĕсем пирки те сăмах пынă.

**Н. НИКОЛАЕВА, В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Октябрĕн 27-мĕшĕ – Автомобиль транспорчĕн ĕçченĕсен кунĕ

# Вĕсемпе çула тухма шанчăклă



*Хальхи вăхăтра водитель ĕçĕ епле пĕлтерĕшлĕ, кунпа пĕрлех вара питех те ответлă пулни каламасăрах паллă. Çăмăлттайлăха, тимсĕрлĕхе çул-йĕр каçармасть. Çитменнине тата эсĕ çынсене илсе çÿретĕн пулсан вара ответлăх вуншар хут ÿсет.*

*Çакăн пек хастар ĕçченсем пулса тăраççĕ те ĕнтĕ эсир сăн ÿкерчĕкре куракан Владимир Федькинпа Анатолий Андреев. Вĕсем – Иван Никитин предприниматель патĕнче автобус водителĕсем. Владимир Николаевичăн водитель стажĕ 30 çул, Анатолий Николаевичăн 15 çул. Автобус водителĕнче вара иккĕшĕ те 10-шар çул ытла. Вĕсемпе çула тухма кирек хăçан та шанчăклă. Хастар ĕçченсем район администрацийĕн Хисеп грамотине тивĕçрĕç.*

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ÿкерчĕкĕ.**

# Ывăл парни – чи хакли

**Район 70 çул тултарнă май**

***Совет Союзĕн Геройĕ Григорий Алексеев 1903 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕнче çуралнă, унтанпа 110 çитрĕ. Вăл вилнĕренпе тата ăна çак ята панăранпа – 70 çул.***

## Яшлăхра туптаннă ответлăх

Исетерккĕри Алексеевсен çемйинче Григорий – чи асли. Амăшĕ çĕвĕç пулнă, çынсем валли çăмăл çипуç кăна мар, хулăм тумтир те çĕленĕ. Ашшĕ колхоз утарçинче тимленĕ. Çавăнпа та аслă ывăл çине сахал мар ĕç тиеннĕ, вăл шутра кĕçĕннисене пăхасси те. Вĕсен кĕрпе арманĕ пуррипе пăри авăртма пыракансене те вăхăтра тивĕçтермелле тата çĕр лаптăкĕ те сахал мар. Çапла вара ĕçлекен кил-йышăн аппаланмалли чылай. Григорий шкулта лайăх вĕреннĕ. Кондратий Трофимович учитель ăна питĕ килĕштернĕ, çавăнпа та хăй пекех вĕрентекен пуласса ĕмĕтленнĕ. Йывăрлăхра ыттисене пулăшма хатĕр пулни, хăюлăх енчен палăрни ачаллах сисĕннĕ. Пĕррехинче урамра тин кăна утма пуçлакан хĕр ача çул варрине тухса кайнă, унта вара çуйхашу – тапранса кайнă лашасен кĕтĕвĕ анатран ыткăнса хăпаранă. Григорий пĕр тăхтаса тăмасăр ăна пулăшма чупнă.

Ашшĕ-амăшĕ пекех йăрăс пÿллĕ яш ÿссе çитнĕ ĕнтĕ, апла пулсан çар ретне тăма та вăхăт. 1925 – 1927 çулсенче Григорий артиллеристсен полкĕнче тăнă. Каярах вара пурнăçне унтах тăсма шухăшланă.

– Атте, анне, маншăн ан кулянăр, йăлтах йĕркеллĕ. Эпĕ ĕçлеме вырнаçрăм, ĕçĕ килĕшет, – тесе çырнă вăл тăван киле.

Çапла вара вăл Иваново облаçĕнчи Кинешма хулинче тĕпленнĕ. Малтан вăрман хуçалăхĕнче тимленĕ. Каярах участок милиционерĕнче вăй хунă. Унтах вырăс хĕрĕпе Нюрăпа çемье çавăрнă, вĕсен Валентин тата Римма ачасем пулнă.

1941 çулхи январь уйăхĕнче Григорирен Татьяна Николаевна посылка илнĕ. Çветтуй Татиана кунĕнче амăшĕн çуралнă кунĕ, çавна май аслă ывăлĕпе кинĕ çĕрçĕн тутăр тата ытти кучченеç ярса панă. Çак парне ватă амăшĕшĕн чи хаклă парне пулнă.

– Кин, эпĕ вилсен мана çак тутăра çыхтарса яр, – тесе каланă ватă хĕрарăм. Родион ывăлĕн мăшăрĕ, Валентина кинĕ, унăн ыйтăвне тивĕçтернĕ.

Вăрçă пуçланнă чухне Григорий 37 çулта пулнă. Малтанхи кунсенчех 19-ти Иван хаяр çапăçура пуç хунă. Çак хыпар тăван киле çитнĕ, çавна май йывăр хуйхăпа пусăрăннă амăшĕ ывăлне ăсатнă çулпа пĕр чарăнми Ивана пур пĕр тупăп тенĕ евĕр пăрлă çумăр витĕр чупнă. Çухату пирки илтсенех пиччĕшĕсем, çарта пулнăскерсем, фронта кайма ирĕк илнĕ, Григорий вăрçă хирне лекнĕ. Кунта вăл чылай çапăçура çар ăсталăхĕпе палăрнă. Хăшĕ-пĕри пирки тăван киле çырса пĕлтернĕ.

Пĕр çапăçура тăшман танкне хăвăрт тивсе илекен шĕвек тултарнă кĕленче пăрахса çунтарнă. Ржев патне çитсен аманнă, госпитальте сипленнĕ. Унтан тухсан вара каллех фронта кайнă.

Черетлĕ çапăçура паттăр салтак тăракан взвода Днепрăн сылтăм енне каçса плацдарма çавăрса илме хушнă. Совет салтакĕсем хăйсем тĕллĕн сулăсем ăсталанă, çула тухнă. Çыран хĕррине çитеспе пирĕн салтаксене тăшман асăрханă. Сăрт çамки курăнсанах Григорий сивĕ шыва чи малтан



сикнĕ, ыттисем те унран юлман. Хĕрÿ çапăçу чылай вăхăта тăсăлнă. Йывăр суранланнă пулин те, вăл каялла чакман. Пĕччен юлнăскер тăшманăн хăй еннелле килекен танкĕсене тĕп тума алла пулемет илнĕ, саппасри магазинсемпе гранатăсене юнашар хунă. Çапла вара вăл танк хыççăн танка вут тивертнĕ. Тискер çапăçура йывăр аманнă, госпитальте тăна кĕнĕ, анчах та сывалайман. Хăш-пĕр документ тăрăх вăл хăйне сумлă ят панине пĕлнĕ. Унăн чĕри хăçан тапма пăрахнă пирки информаци тĕрлĕрен: госпитальте е вăрçă хирĕнче, санитарсем йăтнă чухне вилнĕ тени пур. Исетерккĕне тепĕр йывăр хыпар çитнĕ. 1943 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнче Григорий Алексеев Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнине пĕлтернĕ.

## Çырусем

Тăван киле вăл унччен çапла çырнă:«Хаклă аттепе анне! Украина çĕрĕ çинче çапăçатпăр. Енчен те тăшмана Хĕрлĕ Çар Мускав патĕнче тытса чарман пулсан тăшман пирĕн Чăваш çĕршывне те вут айне тăвĕччĕ, пысăк инкек кăтартĕччĕ». Çак çыру юлашки пулнă.

Çемье архивĕнче çав çулсенчи çырусем упранаççĕ, акă пĕринчи йĕркесем: «Эх, как бы я хотела повидать маму, поговорить с ней, поплакать на ее старческой груди, я потеряла одного дорогого человека для нас обоих. И мне тяжело, а ей как тяжело, она сколько сыновей потеряла. Саша, поцелуй за меня старенькую маму. Мне 61 год, а я считаю маме 91 год... Берегите ее». 1969 çул, апрелĕн 23-мĕшĕ. Алексеева Нюра.

## Ывăлĕсен паттăрлăхĕнче – ашшĕ-амăш тивлечĕ

Ача-пăчан паттăрла ĕçĕ пирки асăнсан, анчах та ашшĕ-амăшĕ пирки палăртмасан, паллах, пысăк çитменлĕх пулĕ. Çавăнпа та Татьяна Николаевнăна ĕмĕр вĕçне тухиччен пăхнă Родионăн ывăлĕ, халĕ сакăр вунă çула сывхаракан Александр, çапларах аса илчĕ:

– Аслă Çĕнтерÿ 30 çул тултарнă çулхине Алексеевсем çуралса ÿснĕ урам вĕçĕнче, амăшĕ ывăлĕсене пĕрин хыççăн тепĕрне вăрçă хирне куççулĕ витĕр ăсатнă вырăнта, обелиск уçрĕç. Унта çакăн пек çырнă: «Здесь будет установлен памятник Татьяне Николаевне Николаевой – ...». Вăл сакăр паттăр ывăл çуратса ÿстернĕ хĕрарăма, символла мар, ятарлă çынна халалланă республикăри пĕрремĕш палăк пуçламăшĕ (закладка) пулнă. Тепĕр урамра уçнă монумент скульптури вара çакăнта пулмалласкерччĕ. Халĕ çак вырăн манăçа тухрĕ тесен йăнăшмăп пулĕ.

1969 çулхине республика уявне ирттерме хатĕрленнĕ май В. Погильдяков сценарийĕ тăрăх Хусанти киностуди документлă фильм ÿкерчĕ. Унта 89 çулхи Татьяна Николаевна хăй кулленхи ĕçне пурнăçлать: çăнăх алать, чуста çăрать, çăкăр пĕçерет. Тимлесе тинкермесĕрех пичĕ çинче вара хутлă-хутлă таран йĕрсем курăнаççĕ. Ывăлĕсемшĕн тата икĕ вăрçа хутшăннă, Георгиевски хĕрес кавалерĕ пулнă Алексей Илларионович мăшăрĕшĕн мĕн чухлĕ куççулĕ тăкнă пирки шухăшлама та йывăр.

## Исетерккĕрен – Президент полкне

Асăннă кил-йышра аслисем ачисене çĕр-шыва юрăхлă çынсем пулма вĕрентсе ÿстересси яланах тĕпре пулнă. Арçын тивĕçĕсенчен пĕри – салтак пуласси. Акă Алексеевсен йăхĕнчи Николай Илларионов (Родионăн мăнукĕ) Президент полкĕнче çар ĕçне пурнăçлать. Вăл çак тивĕçе Мускав хулинче тÿрĕ чунпа çÿллĕ шайра тата пысăк ответлăхпа пурнăçлани пирки пĕлтерни асăннă йышшăн пысăк чыс. Паллă ĕнтĕ, кунта пулакансем сайра-хутра кăна. Тĕп вырăнта ăс-тăн çивĕчлĕхĕ, йăх-несĕл ăнăçлăхĕ, кĕлетке илемĕ тата ытти те. Халĕ маттур салтак кĕçех тăван киле çитмелле.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

---

**Саламлатпăр**

Отаркка ялĕнче пурăнакан, район хаçачĕн фотокорреспонденчĕ пулса ĕçленĕ **Анатолий Витальевич НИКОЛАЕВА** 50 çулхи юбилейĕ ячĕпе саламлатпăр, ĕçре ăнăçу, ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр.

**Редакци коллективĕ.**

Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра – Мăн Шашкар ялĕнче пурăнакан **Вера Геннадьевна ТУШИЛКИНАНА** 30 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр, умри çулу санăн яланах анлă та çутă, такăр пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕ, тăванĕсем.**



Супруг, папа родной наш любимый и дедушка славный, незаменимый! С 65-летием поздравляем **ЯРИКОВА Льва Андреевича**, желаем всяческих благ, чтобы ты никогда не болел и не старел, и был вечно молодым, мудрым, добрым и нежным.

**С поздравлением: супруга, дети, зятья, внуки.**



Юратнă мăшăра, хĕрĕме, аппана, аннене – Мулкачкасси ялĕнче пурăнакан **Галина Тимофеевна ИВАНОВАНА** 60 çулхи юбилейпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, ĕмĕрÿ вăрăм килтĕр. Пĕр-пĕрне ăнланса пурăнма юратупа килĕшÿ, ĕмĕт-шухăшсене пурнăçа кĕртсе пыма вăй-хал сунатпăр. Çумра яланах шанчăклă çынсем, умра çутă та ырă кунсем пулччăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, ывăлĕ, кинĕ, кĕрÿĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**



Юратнă тăвана, шăллăма, пиччене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Лев Андреевич ЯРИКОВА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр. Сирĕн сĕтел çинче яланах çăкăртăвар пултăр, пур тăванĕсемпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Эс пуррипе эпир савăнатпăр.

**Салампа: Журавлевсен, Маткинсен, Яриковсен, Охотниковсен çемйисем.**



Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Евстафий Андреевич КАСЕЕВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Ĕмĕтленнисене пурнăçлама вăй-халу çитсе пытăр. Малашне те ачусен, мăнукусемпе тăванусен ăшшине туйса килĕштерсе пурăнма Турри пулăшса пытăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе ывăлĕсем, кĕрÿшĕпе кинĕсем, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем, тăванĕсемпе çывăх çыннисем.**



Горячо и сердечно поздравляем с юбилеем **РОМАНОВУ Наталью Афанасьевну!**

Родная ты наша любимая мама,
Спасибо за все, что ты нам отдала.
Мы скажем тебе откровенно и прямо,
Для нас ты всегда самой лучшей была.
Так будь же здоровой, такой же красивой,
Ведь только добро твои годы несли,
Желаем тебе мы огромного счастья,
И низкий-низкий поклон до земли!

**С поздравлениями: муж, дети, внуки, свекровь, родные и близкие.**



Пирĕн юратнă, хаклăран та хаклă çыннăмăра – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Анатолий Витальевич НИКОЛАЕВА** чĕререн тухакан мĕнпур ăшă та çепĕç туйăмсемпе юбилей ячĕпе саламлатпăр. Мăнаçлă Атăл шывĕн çулĕ евĕр вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, юман пек çирĕп сывлăх сунатпăр. Пурнăçу телей çырмипе лăпкăн юхтăр. Эсĕ пурри – пирĕншĕн нимĕнпе виçейми пуянлăх, савăнăç, телей. Турри сана пулăшса вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрÿшĕсем, ывăлĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Хамăрăн чи юратнă çыннăмăра – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Юрий Федорович ПЕТРОВА** 55 çул тултарнă ятпа чунтан саламлатпăр.



Тавах, аттемĕр, эс пурришĕн, кил чысĕпе çемье ăшши пулнишĕн. Мĕн кирли йăлт пултăр сан: иксĕлми вăй-хал, хастарлăх, çирĕп сывлăх, вăшаватлăх, çемьере ялан татулăх, пурнăçу сан пултăр тулăх. Çиçтĕр сăн-питре телей, савăк пултăр юбилей.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсем, хĕрĕ, кинĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Пирĕн юратнă хаклă çыннăмăра – Тури Панкли ялĕнче пурăнакан **Геннадий Евграфович АНИСИМОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă туйăмпа саламлатпăр. Нумай пурăнма сана, ырă çынна, Турри сывлăхпа вăй-хăват парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр. Çумра яланах шанчăклă çынсем, умра яланах çутă та ырă кунсем пулччăр. Кĕрекÿ яланах тулли, çĕр çинче мĕн пур ырри сана валли пултăр.

**Салампа: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, икĕ кĕрÿшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

# «БРИЗ» ресторан пурне те хаваспах кĕтет

***Алăк уçатăр та питĕ хăтлă та илемлĕ зала кĕретĕр. Килĕшекен вырăн тупса тирпейлĕ хатĕрленĕ сĕтел хушшине ларатăр. Эсир вырнаçнине курса ăшă кăмăллă та таравват официантка нумай кĕттермесĕрех сирĕн пата пырать. Менюра кăтартнинчен тутлă апат-çимĕç суйлатăр. Кăшт кăна кĕтетĕр – техĕмлĕ апат илсе пыраççĕ. Эсир вара чĕлхе çăтса ямалла, çав тери тутлă апат çинĕ чух çак лăпкăлăхпа, илемпе, капăрлăхпа киленетĕр, хирĕç ларакан тăванпа е юлташпа пур кăмăлтан калаçатăр. Залта çак вăхăтра – чĕрĕ артист, чĕрĕ юрă, кирлĕ пулсан – чĕрĕ ташă та...***

***Юмахри пек. Çапла-и? Е хуласенчи чи чаплă ресторансенче кăна кун пек пулать тетĕр-и? Çук çав, йăнăшатăр. Халĕ кун пеккине Муркашрах тупма пулать. Муркаш райповĕн «БРИЗ» ресторанĕ ĕнер хăйĕн алăкĕсене уçрĕ.***




Маларах уçăлнă «Бриз» пиццери-кафепе юнашар вырнаçнă хăй патне илĕртекен ресторан пĕр вăхăтра 150 çын йышăнма пултарать. Апла пур тăван-пĕтене чĕнсе туй ăçта ирттерес ыйту та Муркаш районĕнче пурăнакансемшĕн, вĕсемшĕн кăна та мар, хăйне май татăлчĕ темелле. Кун пек чаплă залта юбилей каçĕ ма ирттерес мар тата? Ĕмĕр тăршшĕпех ĕçлесе тивĕçлĕ канăва та тивĕçлĕ лару-тăрура тухнине мĕн çиттĕр? Ĕç хыççăн юлташсемпе урăх ниçта та мар, шăпах çакăнта тĕл пулнине те нимĕн те çитмест.



– Çакăн пек ресторан туса хута ярасси пирки темиçе çул каяллах шухăшлама тытăнтăмăр. Районта пурăнакансем туйсене, юбилейсене Шупашкара тухса е маларах тата районти шкулсен тăвăр столовăйĕсенче ирттерсе тертленетчĕç. Эпир те, райпора ĕçлекенсем, çакна хамăр çинче пĕрре кăна туйман. Çапла вара хамăр районта пурăнакансене чаплă вырăнпа тивĕçтерме тĕллев лартрăмăр. Тĕллев пулсан ун патне çирĕппĕн утатăн. Кăçал çулла строительстве ĕçĕсене вăраха тăсмасăр туса ирттертĕмĕр. Ресторан вăл ресторан тенине тивĕçтермелле, çавăнпа та илемлĕх, хăт ыйтăвĕсене те татса пама дизайнерсене шантăмăр, – теççĕ Муркаш райповĕн ертўçисем.

Чăнах та, ресторан хăйĕн «статусне» шалти килĕшўлĕхпе, капăрлăхĕпе пĕтĕмпех тивĕçтерет. Ку кăна та мар. Ресторанта çичĕ ăста повар ĕçлет: мĕнле кăна тутлă апат-çимĕç хатĕрлемеççĕ пулĕ – пăхса тĕлĕнмелле, çисе киленмелле. Официанткăсем те хăйсен ĕçне пĕлеççĕ, апат-çимĕç суйлама та пулăшаççĕ. Вĕсемпе пĕрлех чашăк-тирĕк çуталса кăна тăтăр тесе кухньăра икĕ ĕçчен вăй хурать, ресторанти тирпейлĕхшĕн тепĕр икĕ техслужащи тăрашать.

**«БРИЗ» ресторанăн ĕç графикĕ çынсемшĕн питĕ меллĕ: вăл кашни кунах 10 сехетрен пуçласа 23 сехетчен ĕçлет. Кунта сĕтеле те маларах йышăнса хума пулать. 62-2-27 номере пурин те çырса хумалла, вăл яланах алă айĕнче пултăр. Кĕтмен хăнана та, инçетри юлташа та «БРИЗ» ресторана илсе пырсан, ĕненĕр, тав сăмахне вĕсем сире вĕçĕ-хĕррисĕр калĕç, хăйсен кăмăлĕ хăпарнипе те хаваслăнĕç.**

Ĕнер 19 сехетре «БРИЗ» официаллă майпа хăйĕн пĕрремĕш хăнисене ăшшăн кĕтсе илчĕ. Пурте пулчĕç кунта – районти ертўçĕсем кăна мар, тĕрлĕ вырăнта ĕçлекенсем те, студентсем те. Çакă вара ресторан кашни çыннăн меллĕ пулнине тепĕр хут çирĕплетрĕ кăна. Чăнах та апат-çимĕç хакĕ вăтам хаксен шайĕнче, ăна хатĕрлени вара – çўллĕ шайра. Çакна кашниех палăртрĕ.

Райпо ертўçисемшĕн ĕнерхи каç тав сăмахĕсем илтмелли каç пулчĕ темелле, уйрăмах райпо канашĕн ертўçин Борис Васильевич Андреевăн малтурттăмлăхне, ĕçлеслĕхне тата чи кирли – халăхшăн тăрăшнине пурте палăртрĕç.

Ĕнерхи каç «БРИЗ» ресторан кунта апатланма килнисене пысăк парне туса пачĕ. «Домино» шоу-балет тата Чăваш филармонийĕн эстрада артисчĕсем кану каçне татах та çўллĕрех шая хăпартма пулăшрĕç.

– Малашне те эпир юрăçсене чĕнсе çакăн евĕр каçсем ирттерме шухăшлатпăр. Тен, юрă-кĕвĕ жанрне кура, тематикăлла каçсем те йĕркелеме пуçлăпăр. Уйăхра çакăн пек пĕр-икĕ каç çынсен кăмăлне татах хăпартасса шанатпăр, – пĕлтереççĕ хăйсен шухăш-кăмăлне райпо ертўçисем.

«БРИЗ» ресторан кашни çыннах хаваспа кĕтсе илет, йышăнать, çавăн пекех ăшă кăмăлпа ăсатса ярать. Çакна хăвăр та çитсе курса ĕненме пултаратăр.

Тата акă мĕн каламалла: çак чаплă ресторан пирĕн апатлану культурине ўстересси те иккĕлентермест.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене**

# Кулленхи калаçу – çĕр тавра

**Юлашки тапхăрта ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр ыйтăвĕ тĕп вырăнта. Унпа тĕллевлĕ усă курнине контроллесси район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕ çинче. Черетлĕ тĕрĕслевпе асăннă пай ертўçи И. Захаров паллаштарма кăмăл турĕ:**



– Район администрацийĕн ĕçченĕсенчен тăракан ушкăн çĕрпе тĕллевлĕ усă курнине вырăнсене тухса тĕрĕслет. Саккуна пăхăнман арендаторсем тĕлĕшпе акт çырма, информацие ытти органсене çитерме тивет. Ĕçе тишкерсе йĕркене пăхăнман çĕр хуçисене администрацивлă майпа ответ тыттараççĕ. Кăçалхи тĕрĕслеве икĕ тапхăра пайланă: майăн 22-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 26-мĕшĕччен тата августăн 27-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 29-мĕшĕччен. Пĕрремĕш тапхăрта 400 яхăн çĕр лаптăкне тĕрĕсленĕ, çавна май çĕрпе тĕллевлĕ усă курман 15 факт тата ятарлă ирĕксĕр усă курнă 5 факт тупса палăртнă. Саккуна пăснă пирки ĕçсене Чăваш Республикин Росреестр управленине тăратнă.

Халĕ – тĕрĕслевĕн иккĕмĕш тапхăрĕ. 5 факт тĕлĕшпе акт çырасси пырать. Çавăн пекех пĕр арендатор пирки документсене суда тăратма хатĕрлетпĕр, унта килĕшĕве пăрахăçлас ыйту тăрать.

Çавăн пекех муниципалитет пурлăхĕпе усă курнăшăн вăхăтра тўлесси пирки те манмалла мар. Çĕре арендăна илнĕшĕн тўлеменнисемпе килĕшĕве татма та тивет. Кăçал 88 арендаторăн парăмĕ 4659562 тенкĕпе танлашнă. Юлашки тапхăр тĕлне ку кăтарту – 738889 тенкĕ, çĕрпе усă куракансене кун пирки пĕлтернĕ ĕнтĕ. Йĕркене пăхăнса ĕçлеменнисемпе килĕшĕве татма та тивĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

# Ашшĕсем те айккинче юлмаççĕ

Çак эрнере пирĕн районта тепĕр обществăлла организаци йĕркеленчĕ – Ашшĕсен канашĕ. Ăна Раççейри хĕрарăмсен союзĕн съезчĕн йышăнăвне пурнăçласа тата çак обществăлла организаци «Çирĕп çемье – тăнăç патшалăх» программине палăртнăран туса хучĕç. Апла пулсан пирĕн районти ашшĕсем малашне ачалăх, çемье ыйтăвĕсене тарăнрах тишкерме тата çакăнпа çыхăннă ĕçсене активлă хутшăнма тивĕç.

– Ачасен прависемпе интересĕсене хўтĕлесси, обществăра çемье хаклăлăхĕсене çирĕплетесси, ачасене воспитани парассинче ашшĕсен ответлăхне ўстересси, çемьесемпе профилактика ĕçне туса пырасси – акă мĕн тери анлă ĕç кĕтет пире, ашшĕсене. Пирĕн хул пуççи çине ачасемпе çамрăксене йĕркене пăсассинчен асăрхаттарасси те тиенет, анчах та эпир çак тата положенипе палăртнă ытти ĕçе пурнăçлама пултаратпăр, – пĕлтерет çĕнĕ канашăн ертўçи, районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК директорĕ Александр Куликов.

Пултармасăр. Канашра – ĕçлеме пултаракан пуçарулă ашшĕсем: район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В. Ананьев, Турă Амăшĕн Владимирски турăшĕн Муркашри чиркĕвĕн настоятелĕ Федор атте, Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Матросов, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Ермолаев, А. Быков предприниматель, патшалăх ветнадзорăн районти аслă инспекторĕ О. Воробьев.

Пĕрремĕш ларурах вĕсем çитес вăхăтри ĕçсене палăртрĕç. Ашшĕсен канашĕ çитес уйăхрах питĕ пĕлтерĕшлĕ те анлă проект пуçарса яма хатĕрленет. Хальлĕхе çак проекта вăрттăнлăхра тытаççĕ, анчах та вăл ачасемшĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ пулмаллине каласа хăвармалла.

– Ытти пирки вăхăт çитсен пĕлтерĕпĕр, – теççĕ ашшĕсем.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Следователь-криминалист службине туса хунăранпа – 59 çул**

# Преступление уçассинчи çĕнĕлĕхсем

СССР генпрокурорĕ Р. Руденко 1954 çулхи юпа уйăхĕн 19-мĕшĕнче «Прокурор-криминалист ĕçĕ çинчен» хушăва алă пуснă. 2007 – 2011 çулсенче прокуратура органĕсене реформăласа следствие вĕсен тытăмĕнчен кăларнă.

Кирек хăш вăхăтра та следователь-криминалистсем чи хăрушă та йывăр преступленисене тĕпчеме кайма хатĕр. Преступник явап тытма тивĕç – çакна тĕпе хурса ĕçлеççĕ криминалистика службин сотрудникĕсем. Иртнĕ çулсенче тунă преступленисене уçса парас енĕпе те тимлеççĕ вĕсем. Ахальтен мар ĕнтĕ 2011 – 2013 çулсенче маларах пулнă, ун чухне уçса парайман 133 преступленишĕн айăплисене тупса палăртнă. Çав шутра – çын вĕлернĕ 7, çын сывлăхне вилмеллех йывăр сиен кўнĕ 3, хĕрарăмсене мăшкăланă 3 факт.

Çак ĕçре криминалистикăн çĕнĕ хатĕрĕсем, преступник хăварнă йĕрсене тупма пулăшакан çĕнĕ эксперт тĕпчевĕсем пысăк пулăшу кўреççĕ. Следстви практикинче паян полиграфпа усă курса ирттерекен психофизика тĕпчевĕсем анлă сарăлнă. Вĕсене криминалистика пайĕн аслă эксперчĕ, ку енĕпе ятарласа хатĕрленнĕскер, ирттерет. Следстви комитечĕ йĕркеленнĕренпе 11 – 13-мĕш çулсенче следстви управленийĕнче çакнашкал 450 ытла тĕпчев ирттернĕ. Полиграф пулăшнипе Çĕнĕ Шупашкарта хĕрарăма, Элĕк районĕнче çул çитмен хĕре вĕлернĕ преступленисене уçса панă.

«Йăлана кĕнисемпе» пĕрлех следовательсем уголовлă ĕçсене тĕпченĕ чухне генетика, одорологи экспертизисемпе, çĕнĕ ытти мелпе те анлă усă кураççĕ. Тĕслĕхрен, панорама 3D видеоўкерĕвĕ – унпа преступлени, инкек пулнă вырăна курăмлăрах тума май пур, çавна май «виртуаллă тур» йĕркелесе инкекĕн чăн калăпăшне хаклама пулать.

Следстви управленине çĕнĕ техника килсех тăрать. UFED Touch комплекс электрон хатĕрĕсенчи «çухатнă» информацие тавăрма май парать. Эксперт çути, цианакрилат камери, вĕсем куçа курăнман япаласене те тупма пулăшаççĕ. Юлашки вăхăтра следовательсем преступленисене уçса памашкăн гипнорепродукципе усă курма тытăнчĕç.

**О. ДМИТРИЕВ, РФ Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн ертўçин аслă пулăшуçи.**

**Викторина**

# «Статистика тĕлĕнтермĕшĕсем»

Раççейĕн статистика тĕп комитечĕ йĕркеленнĕренпе кăçал – 150 çул. Çавна май тата кăçал Пĕтĕм тĕнчери статистика çулталăкĕ пулнине шута илсе Чăвашстат республика шайĕнче ятарлă викторина ирттерет. «Статистика тĕлĕнтермĕшĕсем» ятпа иртекен викторинăна Чăваш Енри пĕтĕмĕшле пĕлў паракан шкулсенчи 7–8 классенче вĕренекенсем хутшăнма пултараççĕ.

Викторинăн пĕрремĕш тапхăрĕ апрель уйăхĕнче Шупашкарти шкулсенче иртнĕ. Октябрь–декабрь уйăхĕсенче иккĕмĕш тапхăр пулать. Викторинăна кашни районта пĕр-пĕр шкулта ирттерме палăртнă. Çак викторина ачасене статистика ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан, вĕренекенсен пĕлў шайне ўстерме пулăшакан, статистика даннăйĕсемпе кăсăкланса вĕсемпе усă курма вĕрентекен социаллă проект шутланать.

Пирĕн районта викторина декабрь уйăхĕнче пулмалла. Вăл уçă урок мелĕпе иртĕ.

**З. ВИНОГРАДОВА, Чăвашстатăн Муркаш районĕнчи ертсе пыракан эксперт специалисчĕ.**

# ХАЛĂХ ТĔРĔСЛЕВĔ

**Проект Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**
Кăларăма Н. Николаева ертсе пырать.

## Ĕçе пуçаруллăн тытăнчĕç



РФ Шалти ĕçсен министерстви çумĕнче тата унăн вырăнти органĕсенче обществăлла канашсем йĕркелесси пирки калакан указ 2011 çулхи май уйăхĕнче вăя кĕнĕччĕ. Унпа килĕшӳллĕн пирĕн республикăра та министерство çумĕнчи обществăлла канашпа пĕрлех районсенчи канашсем те йĕркеленчĕç.

Çак кунсенче пирĕн районти обществăлла канашăн çĕнĕ тытăмĕ пĕрремĕш ларăва пухăнчĕ. Каласа хăвармалла, çак канаша сынсем хăйсен ирĕкĕпе çеç кĕме пултараççĕ, анчах та вĕсен пурнăçри хаклăлăхĕсем, гражданла активлăхĕ пĕлтерĕшлĕ.

Обществăлла канашăн ĕçĕ чылай тата тĕрлĕ енлĕ: полицейскисене аттестацилекен комисси ĕçне хутшăнасси, преступление тата йĕркене пăснине хирĕç кĕрешессинче полици сотрудникĕсемпе çынсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетесси, çамрăксене патриот воспитанийĕ парасси тата ытти енсем. Кун пирки ларура тĕплĕ калаçу пулчĕ. Обществăлла канашăн тĕп тивĕçĕ вара полицейскисемпе халăх хушшинчи çыхăнăва тачăрах тăвасси пулса тăрать тесен йăнăш мар. Çыхăну çынсене полицейскисен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарассинче кăна мар, йĕрке хуралçисен ĕçне халăх мĕнле хак панине пĕлсе тăрассинче те, çав хаклавпа пакунлисене паллаштарассинче те, шалти ĕçсен органĕсене пырса тивекен программăсем хатĕрлессине тата пăхса тухассине хутшăннинче тата ытти те. Обществăлла канаш умне лартнă задачăсемпе тĕллевсене шута илсе канаш членĕсем саккунпа пăхса хунă тĕрлĕ правăпа (сăмахран, полици сотрудникĕсен ĕçĕ пирки информаци ыйтса илесси, вĕсен саккунлă интресĕсене хӳтĕлеме явăçни тата ытти те) усă курма пултараççĕ.

Обществăлла канаш, паллă ĕнтĕ, ĕçе те обществăлла майпа пурнăçлама тивĕç. Апла пулсан унăн йышĕнче активлă гражданла позициллĕ çынсем пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсен çынсене те, полици сотрудникĕсене те тĕрлĕ ыйтупа пулăшма хатĕр пулмалла. Çак çынсемпе вулакансене паллаштарни те ытлашши пулмĕ, мĕншĕн тесен канаш членĕсем патне кашниех тĕрлĕ ыйтупа тухма пултарать.

Обществăлла канашăн председателĕ пулма пĕр сасăллă пулса депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн çумне, «Росгосстрахăн» районти уйрăмĕн ертӳçине Валерий Вязова çирĕплетрĕç. Районти шалти ĕçсен пайĕ çумĕнчи ветерансен канашне ертсе пыракан Юрий Соловьева унăн çумĕ пулма шанчĕç.

– Маншăн çак обществăлла ĕç питĕ ответлă та хăйне майлă çĕнĕ ен шутланать, анчах та малтан эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕнче вăй хуни çак ĕçре пулăшĕ тесе шутлатăп. Çавна май канаш ĕçне тĕрĕс те анлăн йĕркелеме тăрăшăп, – терĕ В. Вязов хăйне председатель тилхепине шанса панăшăн тав туса.

Канаш йышĕнче пирĕн районти çак çынсем: «Агронефтепродукт» кооператив ертӳçи, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В. Кожанов, Муркашри вăтам шкул директорĕ Н. Смирнов, ачасемпе çамрăксен районти спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК директорĕ А. Куликов, Муркаш райпо канашĕн ертӳçи Б. Андреев, Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн ертӳçи Л. Майкова, Ф. Ягушов иерей, Афганистан вăрçин инваличĕсен Пĕтĕм Раççейри обществăлла организацийĕнче тăракан К. Петров.

Иртнĕ ларура обществăлла канаш хăйĕн регламенчĕпе паллашрĕ, обществăлла канаш членĕсен кодексне йышăнса çирĕплетрĕ. Малаллахи утăмсене палăртнă май, ĕç тĕрлĕ енлĕ пулнине кура, кашни еншĕн ответлă пулса тăракана та çирĕплетрĕç.

Обществăлла канаш членĕсем ĕçе пуçаруллăн тытăнчĕç – ума пысăк задачăсем лартрĕç. Канашăн ĕçне, шалти ĕçсен пайĕн ĕçне те тĕтăшах район хаçачĕнче тĕрлĕ енлĕн çутатса халăх патне çак майпа та çитермелли пирки каларĕç. Çынсемпе тĕтăшах тĕл пулса ыйтусене сӳтсе явассинчен те никам та пăрăнмĕ. Участковăйсем халăх умĕнче отчет тăвас ĕçе обществăлла канаш членĕсем те хутшăнассине пĕлтерчĕç.

## Чиновник: халăх куçĕпе

Патшалăх тата муниципалитет служащийĕсем пирки, халăхра сарăлнă пек каласан чиновниксем пирки, нумай чухне массăллă информаци хатĕрĕсенче те, çынсенчен те пачах та ырă мар сăмах илтме пулать. Хаçат-журналсенче, радио-телевизорпа хăш-пĕр информацие чăн-чăн тĕшман çинчен вуланă пек вулатăн е куратăн-илтетĕн. Паллах, пур чухне те çакă чăнлăхпа килĕшсе тăмасть.

Патшалăх тата муниципалитет служащийĕсем çынпа çывăх пулни икĕ еншĕн те пĕлтерĕшлĕ. Пĕр-пĕрне «илтни» ĕçĕн эффективлăхĕ çине те ырă витĕм кӳрет. Апла пулсан çынсен шухăш-кăмăлĕ лайăх енне улшăнасси çине те.

Пирĕн районти чиновниксем, вырăнти влаç органĕн представителĕсем халăха çывăх-и? Ертӳçĕсен мĕнле пахалăхĕсем вĕсен ĕçĕнче пĕлтерĕшлĕ тесе шутлатăр? Эсир вĕсене шанатăр-и? Тен эсир патшалăх тата муниципалитет служащийĕсем татса пама пулăшнă ыйтусене аса илсе вĕсен лайăх енĕсем пирки калаçу пуçарас тетĕр?

Хаçат вулакансен хуравĕсене кĕтетпĕр. Çырусене Муркаш, Мир урамĕ, 9 А çурт адреспа «Халăх тĕрĕслевĕ» тесе палăртса ярса памалла е 62-1-38 номерпе шăнкăравласа пĕлтерме те пултаратăр. Кашни хыпара, çырăва пăхса тухăпăр.

## Автобус çӳретме пулать-и?

***«Ĕлĕк лашапа çӳренĕ. Хальхи вăхăтра пĕтĕм ĕçе техникăпа пурнăçлаççĕ. Кашни яла тенĕ пекех халĕ автобус çӳрет. Çуран çӳреме уйрăмах ватă çынсене питĕ йывăр. Больницăна та, урăх ĕçсемпе те район центрне кайма тӳр килет. Пирĕн яла та – Çурлатрине – автобус çӳретме пулмасть-ши? Район администрацийĕ кун пирки мĕн шутлать?***

***Пирĕн ялтан Муркашра ĕçлекенсем те нумайăн. Ирпе çынсем ĕçе кайнă вăхăтра 7 сехет çурăра, каçпа 18 сехет тĕлнелле е иртерех – кунне 2 рейс тума май çук-ши? Автобус пулсан питĕ аван пулмалла.***

**Владимир Сергеев.**
**Çурлатри ялĕ».**

**Çак çырупа район администрацийĕн капиталлă строительствăпа обществăлла инфраструктура аталанăвĕн управленийĕн пуçлăхне В. Никитина паллаштартăмăр. Унăн хуравĕ çапла пулчĕ:**

– Пирĕн районта пассажирсене автомобиль транспорчĕпе турттарассине йĕркелесси çинчен калакан ятарлă положени пур. Çак положенипе килĕшӳллĕн муниципалитет шайĕнче çĕнĕ маршрут уçма çынсем тата ял тăрăхĕн администрацийĕ ыйтнипе полномочиллĕ органăн ходатайстви пулмалла.

Çурлатри ялĕ çывăхĕнчен пассажирсене турттаракан транспорт сахал мар иртсе çӳрет: ирпе «Анаткасси – Шупашкар» маршрутпа çӳрекен автобус – 7 сехет те 25 минутра пулать, «Йӳçкасси – Муркаш» маршрутпа – 7 сехет те 30 минутра, «Вăскасси – Муркаш» маршрутпа – 7 сехет те 35 минутра; каçпа «Муркаш – Вăскасси» маршрутпа – 17 сехет те 30 минутра, «Шупашкар – Анаткасси» маршрутпа – 17 сехет те 34 минутра, «Муркаш – Тойкилтĕ» маршрутпа – 17 сехет те 35 минутра, «Муркаш – Вăскасси» маршрутпа – 17 сехет те 55 минутра.

7 сехет çурăра тата 18 сехетре пассажирсене турттаракан транспорт çӳрекен çĕнĕ маршрут уçма вара çак вăхăтсенче çӳрекен пассажирсен йышне тĕпчесе пĕтĕмлетӳ тумасăр май çук.

## Вĕрентекенĕн хăйне тивĕçлĕ тытмалла

***«Сентябрĕн 22-мĕшĕнче Муркашри стадионта «Нацисен кросĕ», унпа пĕрлех Олимп чемпионкин В. Егоровăн парнисене çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетика ăмăртăвĕсем пулчĕç. Ăмăртусем тивĕçлĕ шайра иртрĕç, анчах вĕсем чаплă шайрах вĕçленмерĕç темелле. Калайкассинчи вăтам шкулти физкультура учителĕсем Моисеев тата Люцев итогсемпе килĕшменнине ачасемпе ашшĕ-амăшĕсем, хăнасем умĕнчех киревсĕр сăмахсемпе перкелешнипе кăтартса пачĕç. Çитменнине Моисеев вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ патне шăнкăравласа хӳтĕлех ыйтрĕ.***

***Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен вĕренӳ çинчен калакан çĕнĕ саккун вăя кĕчĕ. Унта учительсем ачасем умĕнче хăйсене çапла тивĕçсĕр тытма пултарассине çырнă-ши? Çакăн пек учительсем кама воспитани пареççĕ?***

***Пирĕн çырăва вуланă хыççăн хаçат вулакансем калаçăва хутшăнасса кĕтетпĕр.***

***Ашшĕ-амăшĕсем: Григорьев, Белов, Димитриева, Скворцов, Васильев».***

Çак çырăва хуравсăр хăварас мар тесе район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсемпе тĕл пултăмăр. Вĕсен хуравĕсемпе паллашнă хыççăн хаçат вулакансем те хăйсен шухăшне пĕлтерессе шанатпăр.

**Район администрацийĕн вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова:**

– Эпĕ çырура асăннă вăхăтра стадионта пулман, анчах та физкультура учителĕ В. Моисеев хам пата шăнкăравланине пытармастăп. Пирĕн калаçура вăл ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе килĕшменнине пĕлтерчĕ тата çак лару-тăрура чăнлăх тупма пулăшма ыйтрĕ.

Хамăр енчен эпĕ Калайкассинчи вăтам шкулти коллектива асăннă тĕслĕхе шута илсе вĕрентекенсен этики çинчен тепĕр хут калаçу иртterme сĕнтĕм. Кун пек калаçусем ытти шкулсенче иртерни те ытлашши пулмĕ.

**Район администрацийĕн физкультурăпа спорт тата туризм секторĕн ертӳçи В. Петров:**

– Çырура асăннă вĕрентекенсем ăмăртусен пĕтĕмлетĕвĕпе килĕшменнине çапла майпа пĕлтерчĕç темелле ĕнтĕ. Спорт ăмăртăвĕсен йĕркипе вара пĕтĕмлетӳпе килĕшменнине протест çырса пĕлтермелле, киревсĕр сăмахсем янăратса мар. Пĕтĕмлетӳ хыççăн çур сехет хушшинче çырса панă протеста судьясен пăхса тухма тивĕç.

Спортăн кашни тĕсĕпе протест памалли çинчен калакан ятарлă положени пур. Унта укçа тӳлемелли çинчен калани те пур, эпир вара кун пек тĕслĕхсем пулнă пулсан та ыйтăва укçа-тенкĕсĕрех татса панă.

## Мĕнле йĕркепе ĕçлеççĕ?

***«2009 çултанпах манăн хуçалăхран вутă, чикмексем, тюкланă утă çухалнă тĕслĕхсем пулчĕç. Кӳрше такам та килсе çӳретчĕ, эрех ĕçетчĕç. Вĕсен çут çанталăк газне те кĕртменччĕ. Çавăнпа та кам вăрлани пирки шухăшласан манăн куç умне вĕсем тухатчĕç. (Халĕ кӳрше вилнĕ ĕнтĕ). Кун пирки тӳрех полицейскисене, малтан пулсан милицисене, пĕлтернĕ. Вĕсем килеççĕ, ыйтса пĕлсе объяснительнăйсем, ытти ĕç документчĕсем çыраççĕ. Анчах та малалла нимĕн те ăнлантармаççĕ. Хыççăн килмеççĕ те. Пирĕн полицейскисем çакăн пек тĕслĕхсемпе мĕнле йĕркепе ĕçлеççĕ, пĕлес килет».***

Катькас ял тăрăхĕнче пурăнакан В. Соколова хăйĕн пăшăрханăвĕпе çапла паллаштарать.

Ку ыйтупа эпир районти шалти ĕçсен пайĕн полицин участокри уполномоченнăйĕсен ертӳçипе В. Алексеевпа тата хальхи вăхăтра Катькас ял тăрăхĕнче участковăй пулса ĕçлекен И. Петровпа калаçрăмăр. Вĕсен хуравĕнчен акă мĕн пĕлтĕмĕр.

Полицейскисем хăйсен ĕç йĕркипе вĕсем патне килекен кашни хыпарпа, кашни пĕлтерӳпе ĕçлеççĕ. Хыпар пулнă хыççăн лару-тăрăва вырăна тухса тĕрĕслеççĕ, хыпара пĕлтерекенрен, кӳршĕсенчен е ялти ытти çынсенчен лару-тăру пирки тĕплĕн ыйтса пĕлеççĕ. Çак ыйтăмсем мĕн кăтартса панипе процессуаллă йышăну кăлараççĕ. Çапла вара сăмахран, В. Соколова ĕçĕсене шута илсен, ют япалана, пурлăха вăрланă факт çирĕпленмесен е çак тĕслĕх пачах пулман пулсан ĕç материалне архива саккунпа палăртнă тапхăра упранма хураççĕ.

Çакăн пек материалсен тĕрĕслĕхне, вĕсем саккунпа килĕшсе тăнине, ĕçе архива ярасси пирки процессуаллă йышăнăвăн никĕсĕ çителĕклине прокуратура тĕрĕслет. Çапла вара çитменлĕхсем тупса палăртмасан ĕçпуçа малалла тишкермеççĕ.

Полицейскисен ĕçĕ пирки сăмахура тăсса вĕсен ĕçне прокуратура кăна мар, хăйсен ведомство тĕрĕслевĕсем те хак панине каламалла. Акă кăçалхи 9 уйăхри ĕç кăтартăвĕне Шалти ĕçсен министерствин пирĕн районти уйрăмĕ республикăра лайăххисен шутĕнче. Полицейскисен ĕçне 34 критерипе хаклаççĕ, кунта, паллах, пĕтĕмĕшле илсен саккуна пăхăнса ĕçлени малти вырăна тухать. Асăннă тапхăрти ĕçе пĕтĕмлетме пирĕн района нумаях пулмасть Чăваш Республикин шалти ĕçсен министрĕн çумĕ О. Яковлев килсе кайрĕ. Полицейскисен ĕçне «тивĕçтерет» тесе хак панине пĕрлех пакунлисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерессипе те, ял тăрăхĕсенче профилактика ĕçне, халăх дружинникĕсен ĕçне вăйлатмалли пирки те сăмах пулчĕ. Преступленисене уçса парасси ӳснĕ, сотрудниксем администрацилĕ практикăпа усă курасси лайăхланнă. Ĕçе хак паракан критерисенчен 9-шне çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕç, анчах та çитменлĕхсене пирĕн районти полицейскисем пĕтерме пултарасси куç кĕрет.

Полици хроникинчен 12+

## Тавçăруллă студент

Мотоцикла ахальтен урапаллă туман, апла пулсан унăн пĕр вырăнта тăмалла мар, тесе шухăшланă тавçăруллă студент Мăн Шашкарти пĕр хуçалăхри вите патĕнче тăракан мотоцикла курсан. Хăйĕнпе тантăш транспорт хатĕрĕ юсавлă маррине пăхмасăрах каччă ăна килĕштерет-мĕн. Çапла вара хĕрлĕ «Минск» килтен тарать.

Пакунлисем çĕнĕ хуçа патĕнче тăракан транспорт хатĕрне тупнă. Çул çитмен çамрăк тĕлĕшпе халĕ уголовлă ĕç пуçарнă. Ку таранччен судпа айăпланман каччă хăйне хăй такăнтарнине ăнланчĕ-ши?

## Кĕреçепех «тăн кĕртнĕ»

Хальхи вăхăтра тăванпа тăван килĕштерсех каймасть те, ют çынсем пирки мĕн каламалла ĕнтĕ. Çынра çынлăх, йĕркелĕх тени пулмасан ăшă хутшăнусем пирки манма тивет.

Çакна çирĕплетекен тĕслĕх нумаях пулмасть Мăн Токшикра пулнă. Çамрăк хĕрарăм пĕрле пурăнакан арçыннăн ашшĕне (кун пек чух хуняшшĕ тени вырăнсăр пулĕ) темĕн пайлаймасть. Сăмах çине сăмах, хыççăн вара ал-урине те ирĕке ярать. Вăй питти хĕрарăм çитмĕл енне сулăннă арçынна ку та сахал тесе шутлатьши, кил картинчи кĕреçепе те «тăн кĕртет».

Çапла хальхи «пултаруллă» хĕрарăмсем, ĕлĕкхи пек лаша чарма пултарассăн кăна мар...

## Пĕр шыва – икĕ хут

Кампа ĕçмеллине те пĕлмелле текен каларăш халăхра ахальтен сарăлман пулĕ. Акă Муркаш Шаптакра пурăнакан вăтăртан иртнĕ арçын та ăна асрах тытса пурăннă. Çапла пĕрре вăл киле хăна кĕртет: хăйĕнчен çирĕм çула яхăн аслăрах хĕрарăмпа эрех ĕçеççĕ. Хĕрарăм çывăрса кайсан вара арçын унăн кĕсйинчен укçа кăларса илет. Малтан та çакăн евĕр ĕç-пуçшăн судпа айăпланнăскерĕн ку хутĕнче тĕлĕнмеллиех пулмĕ.

**Пичете РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

# Всё включено!

Сегодня почти у многих жителей России словосочетание «всё включено» ассоциируется с отелем на море, где можно пользоваться всевозможными удобствами, ни в чем себя не ограничивая. По такой же схеме – общайся без ограничений, не задумываясь о состоянии баланса телефона – разработаны и тарифы «МегаФон – Всё включено». Каждый из них включает пакет услуг, куда входят минуты звонков абонентам всех операторов, SMSи MMS-сообщения и мобильный интернет. Главное – выбрать свой размер общения.

Тарифные планы, входящие в линейку «МегаФон – Всё включено», названы по аналогии с размерами одежды.

«Всё включено S» –самый «легкий» тариф. За 6,5 рубля в сутки вы получаете пакет, включающий 100 сообщений, 1 гигабайт интернет-трафика (вполне достаточно для общения в социальных сетях и просмотра почтовых сообщений) и 300 минут разговоров с абонентами любых операторов, представленных в Чувашии. Всеми этими услугами можно пользоваться в течение месяца.

«Всё включено M» – вариант для тех, кто общается часто. Пакет из 600 SMSи MMS-сообщений, 3 Гб интернета и 500 минут звонков будет стоить 10 рублей в сутки.

«Всё включено L» имеет еще больший «размер». 3 000 сообщений, 5 гигабайт интернет-трафика и



2 000 минут голосовых вызовов можно использовать за 1 100 рублей в месяц.

А самый «увесистый» тариф этой линейки – «Всё включено VIP» – подойдет тем, кто много путешествует по стране. В пакете – 2 500 SMSи MMS, 25 Гб трафика и 2 500 минут исходящих вызовов. Цена вопроса – 2 500 рублей в месяц.

Что еще важно: на любом из этих тарифных планов общение с абонентами «МегаФона» в Чувашии остается бесплатным даже после того, как пакет минут «опустеет».

Одним словом, при подключении любого тарифа из линейки «Всё включено» вы «оптом» (то есть по выгодным ценам) покупаете сразу все основные услуги связи и спокойно общаетесь именно столько, сколько нужно именно вам.

Узнать подробности о тарифах линейки «МегаФон – Всё включено» и подключиться на любой из них можно в салоне компании «МегаФон» по адресу ул. Ленина, д. 40 (автовокзал).

Шалти ĕçсен пайĕнче

## Алă çĕкличчен шухăшламалла

Эрехе пула темĕнле йăнăш та тума пулать. Акă кăçалхи сентябрь уйăхĕнче Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче пурăнакан Г. Иванов та, ӳсĕрле, хăйĕнпе пĕрле пурăнакан хĕрарăмпа хирĕçсе каять. Хирĕçӳ вара алă çĕкленипе тăсăлать. Хĕрарăма ыраттарнине пĕлсе тăрсах вăл пит-куçран та, ытти çĕртен те 8-10 хутченех çапнă.

Арçынпа пĕр хваттерте пурăннăран хĕрарăм хăйĕн пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн шикленсе, пулса иртнĕ хирĕçӳрен те хăрушăрах лару-тăру тухассине асăрхаттарас тесе Г. Иванова уголовлă явап тыттарма ыйтса заявлени çырать. Кунпа пĕрлех дознани ушкăнĕ Г. Иванов Уголовлă кодексăн 116 статйин 1 пайĕнче çырса панă преступление тунине кăтартакан енсем курăмлине шута илет. Çапла вара асăннă статьяпа никĕсленсе уголовлă ĕç пуçарма йышăнать. Пулса тухнă лару-тăрăва уçăмлатас тĕллевпе çийĕнчех ĕçе тишкереме пуçланă.

РФ Уголовлă кодексри 116 статья хĕнени çыхăннă. Унăн 1 пайĕнче çырса панă тăрăх çынна хĕненĕшĕн е ăна пусахласа ыраттарнăшăн (вăхăтлăх сывлăха хавшатнипе е ĕçлеслĕхе чакарнипе çыхăнман) 40 пин тенкĕ е виçĕ уйăхри ĕç укçи, е çак тапхăрти урăх тупăш чухлĕ штраф пама, е 6 уйăхлăх юсану ĕçĕсене хутшăнтарма, е виçĕ уйăхлăх арестлеме юрать.

